26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
20
ЫТЛАРИКУН
147(6384) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

1943 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, райисполкомсене, парти райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата колхоз правленийĕсене Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыв продовольстви ыйтнине, промышленность—чĕртавар ыйтнине пĕтĕмĕшпех тивĕçтерес тĕлĕшпе 1943 çулта тырпулсене вăхăтра пухса кĕртни тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртни уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен асăрхаттараççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсене ăнăçлăн туса ирттермелли чи пирлĕ услови—мĕнпур комбайнсемпе тракторсене, тырă вырмалли çăмăл машинăсене, автомашинăсене вăхăтра хатĕрлесе çитерни, вĕсене уборка вăхăтĕнче пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерни, тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте колхозниксем, комбайнерсем, трактористсем, совхозсенчи рабочисем пурте хутшăнса ĕçлени, колхозсемпе совхозсене пулăшма хуласенчи, ялсенчи мĕнпур ĕçлеме пултаракан çынсене тата вĕрентекенсене уборка ĕçĕсене явăçтарни пулса тăрать тесе шутлаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ советпа парти организацийĕсене, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Совхозсен Халăх Комиссариатне иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал тумалла марри çинчен асăрхаттараççĕ. Иртнĕ çул çĕрĕç, советпа парти органĕсен хăшпĕр руководителĕсем вăрçă вăхăтĕнче тырпулсене пухса кĕртес ĕçри йывăрлăхсене хакламасăр тăнă, комбайнсене вăхăтра тата пахалăхлăн юсаса çитермен, вĕсене уборкăра туххăçлăн ĕçлеттерейменн, çавна пула тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вăраха янă, авăнсене вăхăтра çапса пĕтермен. Çĕпĕрпе Атăл тăрăхĕнчи тата ытти çĕрти хăшпĕр облаçсенче тырпулсене чылай тăккаланисем пулнă.

Çавăнпа пĕрлех нумай çĕрĕç органĕсем, советпа парти организацийĕсем, колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем лашапа тырă выракан машинăсене вăхăтра хатĕрлесе çитермен, вĕсемпе уборкăн малтанхи кунĕсенче япăх усă курнă, алăпа тырă вырассине çителĕксĕр организацилленĕ, çулса пăрахнă тырра çийĕнчех çыхса пырассине йĕркелемен, кĕлтесене капана хывас вырăнне çĕмелсенчех хăварнă, уйхирсенче вак-тĕвек усă итемсем нумай тунă, çаксене пула вара тырпул чылай çĕрте пăсăлса пĕтнĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре, тата чи малтан тырă хатĕрлес ĕçре, СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕ, Совхозсен Халăх Комиссариачĕ, советпа парти организацийĕсем, уйрăмах Челябинск, Куйбышев, Омск, Пенза, Саратов облаçĕсенче, Алтай крайĕнче, Пушкăрт тата Тутар АССР-сенче пысăк йăнăшсем тунă. Вĕсем колхозсемпе совхозсем уборка пуçламĕшĕнчех государствăна тĕштырă парассине организацилемен, çавна пула уйрăм районсемпе колхозсем тата совхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртейменн.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла шутлаççĕ: 1943 çулта тырпулсене вăхăтра, ăнăçлăн пухса кĕртни тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли государство планĕсене пурнăçа кĕртни нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăвăртрах çапса аркатас ĕçре партипе совет тата комсомол организацийĕсен, совхозсемпе колхозсен, МТС-сен, колхозниксемпе колхозницăсен, МТС-семпе совхозсенчи работниксен вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи питех те кирлĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать.

СССР Совнаркомĕпе, ВКП(б) Центральный Комитечĕ СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, Совхозсен Халăх Комиссариатне, Апат-çимĕç Халăх Комиссариатне, Аш-какайпа сĕт-çу Халăх Комиссариатне, Хатĕрлев Халăх Комиссариатне, облисполкомсемпе крайисполкомсене, союзлă тата автономлă республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, райисполкомсемпе парти райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, ялсовечĕсен председателĕсемпе колхозсене çапла тума хушаççĕ:

I.

Тырпулсене пухса кĕртме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес енĕпе

1. Кашни колхозра, совхозра, МТС-ра тырпулсене пухса кĕртмелли, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем турттарса памалли ĕç планĕсем тумалла. Çав плансенче ĕç вăйĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухассине, комбайнсемпе, тырă вырмалли çăмăл машинăсемпе, транспорт хатĕрĕсемпе, туртăм вăйĕпе усă курассине, государствăна тырпул тата ытти продуктсем турттарма бригадăсем уйăрассине, уборкăпа пĕр вăхăтра килекен ытти ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерессине палăртса хумалла.

2. Тырă вырма тухиччен мĕнпур комбайнсемпе тракторсене, тырă вырмалли çăмăл машинăсене, молотилкăсене, локомобильсене, автомашинăсене тата алăпа ĕçлемелли инвентарьсене юсаса хатĕрлесе çитермелле. Авăн çапнă çĕрте усă курма колхозсемпе совхозсенчи лашапа ĕçлемелли мĕнпур приводсене юсамалла, транспорт инвентарĕпе кӳлмелли хатĕрсене (урапасене, тĕштырă турттармалли ещĕксене, автомобильсемпе тракторсен çумне кăкармалли урапасене, сӳменсене т. ыт. те) юсаса хумалла.

3. Промышленность предприятийĕсенчен, çар заказĕсене пурнăçлассине сиен кӳмесĕр, слесарьсемпе сварщиксенчен, тимĕрçĕсемпе платниксенчен тăракан рабочисен бригадисене МТС-семпе совхозсене комбайнсене тата тырă вырмалли машинăсене уйхирте юсанă çĕрте пулăшма ярас.

Промышленность предприятийĕсемпе учрежденисенчен квалификациллĕ рабочисемпе техникăллă персонала 1,5—2 уйăхлăх срока мобилизацилесе, вĕсене МТС-семпе совхозсенчи комбайнерсемпе трактористсене комбайнсемпе тракторсене уйхирте юсас ĕçре пулăшмашкăн механиксем пулса ĕçлеме ярас, кунта кашни механик 4—5 комбайна пăхса тăма пултартăр. Промышленность предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен комбайнерсене уборка вăхăтĕнче МТС-семпе совхозсене ярас.

4. Комбайнсемпе тракторсене уборка вăхăтĕнче пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерес шутпа кашни МТС-па совхозра кашни 10—15 комбайн пуçне автомашинăсем çинче куçса çӳрекен пĕрер мастерской е кашни 5—8 комбайн пуçне лашапа куçса çӳрекен пĕрер мастерской туса йĕркелемелле. Кашни комбайн агрегатне ытларах ĕçлекен запаслă пайсем, комбайнсене техника енĕпе пăхса тăма тата хирте юсама кирлĕ материалсем, çавăн пекех тата запраска тумалли инвентарьсе [illegible] малли хатĕрсем çителĕклĕ таран тупса памалла.

5. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, парти райкомĕсемпе райисполкомсене—колхозсен, совхозсен тата колхозниксемпе совхозсенчи рабочисен, служащисен уйрăм ĕнисене уборка ĕçĕсене тата çывăх çулла çӳремелли çăмăл ĕçсене явăçтарас тĕлĕшпе районсене задани[с]ем пама, районсенче вара—колхозсемпе совхозсене заданисем пама хушас.

6. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсем пуçланиччен кашни МТС-ра тата совхозра уборка ирттерме кирлĕ мĕнпур тĕрлĕ горючисен, сĕрмелли материалсен запасĕсене 10 кунран кая мар ĕçлемелĕх пухса хумалла. МТС-семпе совхозсене тырă турттарма июнь—июль—август тата сентябрь уйăхĕсем валли горючи уйăрса панă лимитсем 1943 çулхи мĕнпур виççĕмĕш кварталшăн вăйра юлаççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсем валли уйăрнă горючипе ытти мĕнле те пулин ĕçре усă курма чарас. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба тырпулсене пухса кĕртес тата кĕрхи тырăсем акас ĕçсене туса ирттермешкĕн Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсене горючи пĕрремĕш черетпе парса тăма хушас.

7. Комбайнсене тракторнăй бригадăсем çумне çирĕплетсе тухмалла. МТС директорĕсене тракторнăй бригадăн ĕç планне комбайнсемпе тырпул пухса кĕртессине те кĕртме хушас. Çапла йĕрке тăвас: агрегат начальникĕ пулса тăракан комбайнер тракторнăй бригадăн бригадирне пăхăнса тăрать, тракторнăй бригадăн бригадирĕ комбайнпа тырă вырса пухмалли плана пурнăçа кĕртессишĕн тата комбайнсене техника тĕлĕшĕнчен юсавлă тытассишĕн МТС умĕнче, комбайнерпа танах, ответлă пулса тăрать.

8. Облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, парти райкомĕсемпе райисполкомсене иртнĕ çулхи йăнăшсене тумалла марри çинчен асăрхаттарас. Иртнĕ çул уйхир ĕçĕсене мĕнпур колхозниксене тата хуласемпе район центрĕсенчен мобилизациленĕ ĕçе юрăхлă çынсене пурне те ĕçе явăçтарассине хакламасăр тăнă.

Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, парти райкомĕсене, райисполкомсене хуласенчи ĕçлеме пултаракан çынсене тата вĕренекенсене колхозсемпе совхозсенчи ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизацилеме, вĕсене вырăна çитерессине организацилеме, бригадăсемпе звеносем тăрăх вăхăтра вырнаçтарса тухма хушас. 1943 çулта колхозсемпе совхозсенче тырпул пухса кĕртме мобилизациленĕ çынсем валли çакăн пек задани[се]м тăвас: колхозсенче—кашни çынăн 40—50 ĕçкунĕ тумалла, совхозсенче 50—60 кунти нормăсене тултармалла, вĕренекенсен кашнин колхозсенче—20—30 ĕçкунĕ тумалла, совхозсенче—20—30 кунхи нормăсене тултармалла, çав нормăсене тултарсан, вĕсем хăйсем кăмăллапа тăрăх, мобилизацирен хăтăлма пултараççĕ.

9. Уборкăпа тата уборкăпа пĕр вăхăтра килекен уйхир ĕçĕсене мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, подростоксене, совхозсенчи рабочисемпе служащисене, вĕсен çемьисен членĕсене, çавăн пекех тата колхозсемпе пурăнакан колхозник мар çынсене тата совхозсен территорийĕ çинче пурăнакан ĕçе юрăхлă мĕнпур çынсене обязательнăй йĕркепе хутшăнтармалла тăвас пулать.

10. Уборка пуçланиччен МТС-семпе колхозсем тата совхозсем тырпулсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленсе çитнине государство енчен тĕрĕслесе тухмалла. Тырпулсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленсе çитнине государство енчен тĕрĕслесе тухма облисполкомсемпе крайисполкомсен, республикăсенчи Совнаркомсен, парти обкомĕсемпе крайкомĕсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен, райисполкомсемпе парти райкомĕсен ертсе пыракан работникĕсене уйăрмалла. Кашни комбайнпа трактора уборкăна мĕнле хатĕрлесе çитерни çине тата вĕсемпе ĕçлеме лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ комбайнерсемпе тракторпсем çителĕклĕ уйăрса лартни çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем тăрăх туса ирттернĕ тĕрĕслӳ результачĕсене райисполкомсемпе парти райкомĕсенче пăхса тухмалла, тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре палăрнă ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

II.

Тĕштырăсене тата çу тумалли культурăсене пухса кĕртес енĕпе

1. Комбайнсемпе тырă вырмалли çăмăл машинăсене уборкăра талăкне 16 сехетрен кая мар ĕçлемелле тăвас пулать. Комбайнсем ирĕксĕрех чарăнса тăнă чухне комбайн агрегачĕ çумне çирĕплетнĕ колхозниксене комбайн ĕçлекен вырăнтан аякра мар участокра çăмăл машинăсемпе е алăпа тырă вырмалла.

Тыра вырнă çĕрте, жаткăсемпе тата лобогрейкăсемпе пĕрлех, сенокосилкăсене те, вĕсене çак ĕç валли майлаштарса лартса, ĕçлеттермелле. Тырă вырмалли çăмăл машинăсем çинче ĕçлеме чи опытлăрах колхозниксемпе колхозницăсене, совхозсенчи рабочисене уйăрмалла, вĕсене ĕç участокĕсем çирĕплетсе памалла.

2. Уйхирсенче тырпулсене капана хывмасăр хăварма чарас. Тырă вырнă мĕнпур çĕрлаптăкĕ çинче пучахсем турăса пуçтарассине, вĕсене капана хывассине, çавăн пекех тата комбайн хыççĕнчен улăмпа арпана вылькăх алăчĕ валли пухса капана хывассине йĕркелемелле. Комбайнсем хыççăн юлакан улăма пухса капана хывнă çĕрте лашасем, вăкăрсем е ĕнесем турткан волокушăсемпе усă курмалла.

Колхозсене комбайн хыççăн юлакан улăма колхоз картишне турттарса капана хывнă çĕрте колхозăн туртăм вăйĕпе ĕçлекен колхозниксене çак ĕçшĕн мĕнпур улăмăн пиллĕкмĕш пайне (20 процентне) хăйсене пама сĕнес. Комбайн хыççăн юлакан улăма турттарнă тата капана хывнă çĕрте хăйсен ĕнисемпе ĕçлекен колхозниксене хиртен турттарса кĕнĕ е капана хывнă мĕнпур улăмран виççĕмĕш пайне пама сĕнес.

3. Тырă вырма пуçласан пиллĕкмĕш кунран кая юлмасăр авăн çапма тытăнмалла, чи малтан çĕмелсенчен çапассине организацилемелле. Авăн çапассине ăнăçлă туса ирттерес шутпа сложнăй молотилкăсемпе май килнĕ таран тулăкнрех усă курмалла, вĕсене талăкне 20 сехетрен кая мар ĕçлеттермелле. Авăн çапнă çĕрте лашапа ĕçлекен молотилкăсемпе, çавăн пекех тата вырăнти условисене, культурăсен уйрăмлăхĕсене кура ытти майсемпе те анлăрах усă курмалла. Авăн çапнă çĕрте электроприводсемпе, шыва ĕçлекен приводсемпе тата ытти тĕрлĕ установкăсемпе те усă курма тăрăшмалла. Тырă вырса авăн çапнă çĕрте килек мĕнле майпа усă курсан та, авăна тĕплĕн, пĕр пĕрчĕ хăвармасăр çапасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

4. 1943 çулта вир акнă çĕрлаптăкĕсем чылай ӳснĕ пирки тата вире кĕске срокенче пухса кĕртни уйрăмах паха пулса тăнине шута илсе, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вире уйрăмах вăхăтра тата тĕплĕн вырса пухса кĕртме кирлине палăртаççĕ. Кашни уйрăм участокра вир пулса çитнĕ май ăна 5—6 кун хушшинче пухса кĕртмелле.

Çав культурăна пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлеме чи лайăх тракторсемпе комбайнерсене, çак ĕç валли ятарласа майлаштарнă комбайнсене, пур енчен те юсавлă жаткăсемпе лобогрейкăсене уйăрса памалла, вĕсем çумне зерноуловительсем лартмалла, çулнă вире чи кĕске срокенче çыхса капана хывмалла, çавăн пекех васкавлăн çапса пĕтермелле.

5. Колхозсенчи вăрлăх участокĕсен лаптăкĕсем кашни уйрăм культура тăрăх çак виçерен иртмелле мар тăвас: кĕрхи тулăпа ыраш тăрăх—12 процентран, сĕлĕпе урпа тăрăх—13 процентран, çурхи тулăпа хуратул тăрăх—15 процентран, кукуруза тăрăх—8 процентран, вир тăрăх—7 процентран, пăрçа-ясмăк культурисем тăрăх—15 процентран, хĕвелçаврăнăшĕпе ытти çу тумалли культурăсем тăрăх (кăтра йĕтĕнпе арахиссăр пуçне) —5 процентран, кăтра йĕтĕнпе арахис тăрăх—15 процентран, сойăпа клещевина тата рис тăрăх—10 процентран иртмелле мар.

Уйрăм вырăнсенче çутçанталăк инкекĕсене пула вăрлăх участокĕсем çинчен начар тырпул илнĕ çĕрте, райисполкомсем çирĕплетнĕ тăрăх, сортлă вăрлăхсем акнă чи тухăçлăрах вырăнсенчен вăрлăх участокĕсем уйăрса хăварма ирĕк парас.

Колхозсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене пурнăçличчен вăрлăхлăх акман тырпулсенчен вăрлăх фончĕсем хывма чарас.

Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула, вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывиччен, вăрлăхсăр пуçне ытти çĕре расходлама колхозсемпе совхозсене чарас. Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула вырăнсăр усă курнăшăн айăплă çынсене тата çав ĕçе тума хистекен çынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла.

Çапла йĕрке тăвас: вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывнă хыççăн, колхозсемпе совхозсенчи вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тĕштырă ытлашши юлать пулсан, çав ытлашши тĕштырра колхозсемпе совхозсем государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене тултарнă хыççăн—ытти пушăсем валли расходлама пултараççĕ.

(Малалли çитес номерте пулать)

Задание пур ассортиментсем енĕпе те тултармалла

ЭЛĔК. (**Хамăр корр.**). Райпромкомбинат коллективĕ пĕррешĕш çурçул планне 130 процент тултарнипе вĕçлерĕ. Юлашки вăхăтра кушти рабочисемпе работницăсем хăйсен ĕçлес хастарлăхне чылай ӳстерчĕç. М. Семенова, Л. Михайлов, М. Кондратьев, Ю. Иванова юлташсем июнь уйăхĕнче кулленхи заданине те пурнăçлаймастчĕç. Хальхи вăхăтра вĕсем ĕç планне 150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Райпромкомбинатăн çитменлĕхĕ вăл — плана пур ассортиментсемпе те пурнăçласа пымани. Иртнĕ кварталта унăн 1000 кĕрепле, 100 пуртă аври, 150 шăпăр, 300 пĕкĕ туса кăлармалла пулнă, вĕсене туса çитерейменн.

Кам çине шанса ларăççĕ-ши?

ОКТЯБРЬСКОЕ. Июлĕн 19-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районăн план тăрăх вырăнти предприятисемпе учрежденисем валли 4 пин кубометр вутă хатĕрлесе турттармалла. Июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне 1992 кубометр хатĕрленĕ. Октябрьскинчи ватам шкулăн 250 кубометр хатĕрлемелле, вăл 150 кубометр хатĕрленĕ. Перскет касси (заведующийĕ Чунраков), райсоюз, уполнаркомзаг, банк коллективĕсем ку ĕçе халĕ те тытăнман-ха.

Г. А.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем фронтăн ОРЕЛ участокĕнче, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене çĕнтерсе, наступлени туса пынă, 10—12 километр малалла куçнă.

ОРЕЛПА КУРСК енче пирĕн войскăсем ăнăçлă атакăсем туса малалла куçаççĕ. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем çав енче нимĕçсен фашистла войскисем наступлени тума тытăниччен, урăхла каласан кăçалхи июлĕн 5-мĕшĕччен, хăйсем йышăнса тăнă положение пĕтĕмĕшпех каялла таварнă.

БЕЛГОРОД енче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Июлĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем фронтăн Орел участокĕнче тата Орелпа Курск енче нимĕçсен 168 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 106 самолетне ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Фронтăн Орел участокĕнче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене çĕнтерсе, малалла наступлени туса пынă. Совет войскисем малалла куçнине чарса лартма хăтланса, нимĕçсем васкасах резервсем куçарса килеççĕ. Хĕрлĕ Çар чăçĕсем пыра-пыра çапнипе тăшман йывăр çухатусем тӳснĕ тата халăх пурăнакан чылай пунктсенчен пăрахса тухса кайнă.

Пĕр соединенири боецсем, наступление вăйлатса пырса, 300-ре çити гитлеровеца, нимĕçсен 25 танкне, 49 орудине, 30 минометне пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем тытса илнĕ, нимĕç салтакĕсене тыткăна илнĕ. Пĕр чаçри подразделенисем нимĕçсене халăх пурăнакан виçĕ пунктран хĕссе кăларнă, çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче тăшманăн 600 салтакне пĕтерсе тăкнă тата 8 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем тăшманăн танкĕсемпе пехоти тунă темиçе контратакăна сирсе пăрахнă. Каялла чакакан гитлеровецсене хăвалаcа пырса, пĕр чаçри боецсем халăх пурăнакан пысăк пункта çĕмĕрсе кĕнĕ. Çав пункта нимĕçсем хирĕç тăмалли вăйлă çирĕплетнĕ узел туса хунă пулнă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн войскăсем çав пункта пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи войскăсен наступленине активлăн пулăшса тăрать. Пĕр питех те кирлĕ высота районĕнче пĕр чаçăн наступлени туса пыракан подразделенийĕсене хирĕç нимĕçсем вăйлăн тăнă. Совет Союзĕн Геройĕ майор Корякин юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн 20 штурмовик тăшманăн боевой йĕркисем çине бомбăсем пăрахнă тата нимĕçсем çине тупăсемпе пулеметсенчен вăйлăн пенĕ. Пирĕн пехотинецсем çийĕнчех атака пуçласа ярса, çав высотăна йышăнса илнĕ. Штурмовик старши лейтенант Денежкин юлташ нимĕçсен темиçе самолечĕ ларакан площадкăна асăрханă. Летчик, тăшманăн самолечĕсене атакăласа, нимĕçсен икĕ истребительне вут тивертнĕ тата çав площадка çинче ларакан тепĕр 3 самолета сиенленĕ.

* * *

Орелпа Курск енче пирĕн войскăсем активлăн çапăçса пынă. Тăшман, çĕр ăшне чавса лартнă танксемпе усă курса, хаяррăн хирĕç тăрать. Совет войскисем тунă атакăсем халăх пурăнакан темиçе пункта илнипе вĕçленнĕ. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем çак вырăнта нимĕçсем наступлени тума пуçличчен, урăхла каласан кăçалхи июлĕн 5-мĕшĕччен, хăйсем йышăнса тăнă положение пĕтĕмĕшпех каялла таварнă. Çапла вара, пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе, нимĕçсем 8 кун хушши наступлени туса, чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк çухатусем тӳссе тытса илнине пĕтĕмĕшпех каялла пăрахса хăварнă.

Паянхи кун пĕр соединени чаçĕсем, малалла куçса пырса, нимĕçсен 1000 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 20 танкне, артиллерин 7 батарейине тата минометсен 8 батарейине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци нимĕçсен темиçе вунă танкне, 200 ытла автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен икĕ складне сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн пехотине йывăр çухатусем тӳстернĕ.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн чаçсем, артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн, пĕр питех те кирлĕ высота çинче çирĕпленсе ларнă тăшмана атакăланă. Совет боецĕсем питех те нумай чăрмавсене çĕнтерсе тăшманăн 25 дзотне ишĕлтернĕ, хаяр çапăçу хыççăн çав высотăна йышăнса илнĕ. Çавăнти çапăçусенче нимĕçсен 600 ытла салтакĕпе офицерне, 10 минометне тата 25 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Тăшман çухатнă позицисене каялла тавăрма хăтланса, çине-çинех 9 хутчен хаяр контратака тунă. Пирĕн чаçсем, нимĕçсене пысăк çухатусем тӳстерсе, тăшманăн пур контратакисене те сирсе пăрахнă.

* * *

Калинин фронтĕнче нимĕçсен роти пирĕн малти подразделенисене атакăланă. Совет боецĕсем тĕл персе гитлеровецсене сапаласа янă. Йĕплĕ пралук карти патĕнче тăшманăн темиçе вунă виллн выртса юлнă. Снайперсем тата разведка тăвакан ушкăнсем пенипе нимĕçсен 200-ре çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи снайперсен ушкăнĕ, старши лейтенант Михаил Важнин ертсе пынипе, хамăрăн оборонăн малти хĕрринче 25 кун хушши засадăра ларнă. Çав вăхăт хушшинче снайперсем тăшманăн 215 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Ефрейтор Алексей Белов—21 нимĕçе, ефрейтор Махмут Сабаев—19 нимĕçе, старши лейтенант Важнин—14 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Калинин облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ совет гражданĕсене Германие каторгăна илсе каякан гитлеровецсем çине тапăннă. Партизансем, 14 конвоира вĕлерсе, мирлĕ пурăнакан 150 çынна ирĕке кăларнă. 2 станковăй пулемет, 2 автомашина, винтовкăсемпе ытти трофейăсем тытса илнĕ. Смоленск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен 5 çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. 5 паровоза, танксем тиенĕ 15 платформăна, мотоциклсем тиенĕ 2 платформăна, ытти тĕрлĕ грузсем тиенĕ 10 вагона тата горючи тултарнă 5 цистернăна аркатса тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Çар енне куçнă нимĕç ефрейторĕ Гейнц Т. çапла каласа панă: «Пирĕн дивизири салтаксем 1943 çулхи çуркуннепе çу вăхăтне пысăк ĕмĕтпе шанса тăнă. Темиçе уйăх хушши пире: Германи çарĕ часах наступлени тума тытăнать те вырăссене Сталинградшăн тавăрать, тесе ĕнентерсе пынă. Курск çине наступлени пуçласа ярас умĕн рота командирĕ пире Гитлерăн приказне вуласа пачĕ те пирĕн Курска тытса илмелле, терĕ. Гитлерăн приказĕ хăшпĕр салтаксене шанчăк кӳчĕ. Германи çарĕ-шĕн çĕнтерӳллĕ маршсем тумалли вăхăтсем çĕнĕрен таврăнчĕç тесе ĕненчĕç вĕсем. Анчах малтанхи кунсемех пирĕн шухăшсене путлантарчĕç. Батальон командирĕ, сăмахран, пире çапла калатчĕ: пĕр кун хушши наступлени туса нимĕç войскисем мĕнпур Польша кампанийĕнче расходланиччен ытларах боеприпас пĕтернĕ, виçĕ кун хушшинче вара нимĕç орудийĕсем пĕтĕм Франци похочĕ вăхăтĕнчинчен ытларах снарядсем кăларса янă, терĕ. Çавăн пек тапаштарса калани Курск çине тăвакан наступлени путланса ларни çинчен салтаксене пуçĕпех ĕнентерсе пăрахрĕ. Анчах çакăн çинчен батальон командирĕ шухăшламан та пулĕ. Эпир ун сăмахĕсене çапла ăнлантăмăр: виçĕ кун хушши наступлени туса, эпир Франципе çĕнтерсе илме кирлĕ пулниччен ытларах боеприпассем расходларăмăр пулсан, нимĕç çарĕ çавтери пысăк çухатусем тӳссе, нимĕнле ăнăçу та тăваймарĕ. Çакна ăнланса илсе, эпĕ хам ирĕкпех вырăссем патне куçма шутларăм».

ИЮЛĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем фронтăн ОРЕЛ участокĕнче малалла наступлени туса пынă, противникăн контратакисене сире-сире ярса, 4—6 километр малалла куçнă.

БЕЛГОРОД енче разведчиксем вăйлăн кĕрешнĕ.

Июлĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем фронтăн Орел участокĕнче нимĕçсен 78 танкне тата 20 бронемашинине çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери пенипе противникăн 137 самолетне пĕтерсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Фронтăн Орел участокĕнче пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сире-сире ярса, малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр соединени чаçĕсем, малалла наступлени туса пырса, 3000 çити гитлеровеца, 61 оруди, 138 пулемет тата 25 миномет пĕтерсе тăкнă. Пĕр гвардейски чаçăн подразделенийĕсем противник вăйлăн çирĕплетнĕ халăх пурăнакан пункта штурмласа тытса илнĕ, çавăн чухне нимĕç пехотин пĕр батальонне çитиех пĕтерсе тăкнă. Хĕçпăшалсемпе продовольстви темиçе складне тытса илнĕ. Пĕр участокра тăшман пехотин пысăк вăйĕсем 40 танк пулăшнипе контратака тунă.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Пĕр гвардейски чаçăн боецĕсем нимĕçсене мĕнпур хĕçпăшалсенчен персе кĕтсе илнĕ. Противникăн контратакине путланса ларнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен çĕршер виллисем тата персе çĕмĕрнĕ е сунтарса янă 17 танкĕ вырта юлнă.

* * *

Белгород енче разведка тăвакан отрядсем кĕрешнĕ. Волков капитан ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ танк çине ларса тăшман вырнаçса тăнă çĕре кĕрсе кайнă та нимĕçсен 20 танкне асăрханă. Разведчиксем хăйсен подразделенине тавăрăннă та татах тепĕр икĕ танк хӳтĕлесе пынипе каллех тăшман машинисем пухăнса тăнă вырăн патнелле кайнă. Противник патне вăрттăн çывхарса пырса, советăн 3 танкĕ хăвăрт атакăна кĕрсе кайнă. Нимĕç танкĕсем хăйсене çавăн пек пырса çапасса кĕтмен, вĕсем тĕлли-паллисĕр персе каялла чакма пуçланă. Çапăçу хирĕнче противникăн 9 танкĕ çĕмĕрĕлсе тата çунса юлнă. Разведчиксем—кĕçĕн сержант Романенкăпа красноармеец Грушецкий противник вырнаçса тăнă çĕре кĕрсе кайнă та тăшманăн огневой точкине сирпĕнтерсе янă, 10 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕç офицерне тыткăна илнĕ. Старшина Егоров ручной пулеметран пĕр черет персе тăшманăн «Мессершмитт—109» йышши истребительне ӳкернĕ. Красноармеец Кавригă противотанковăй пăшалпа икĕ хут персе «Юнкерс—88» йышши бомбардировщика вут тивертсе янă. Самолет пирĕн территори çине ӳкнĕ те экипажĕпе пĕрлех çунса кайнă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăç енерехре нимĕçсем, малтанхи кун çухатнă высотăна каялла тавăрма хăтланса, темиçе контратака тунă. Пирĕн подразделенисем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă, йышăннă позицисене çирĕппĕн тытса тăраççĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 салтакĕ вилли, çунса кайнă е çĕмĕрĕлнĕ 8 танкĕ вырта юлнă.

Пирĕн авиаци Хура тинĕсре противникăн подводнăй лодкине путарнă.

Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен транспортне путарнă, противникăн 2 транспортне тата хуралти карапне сиенленĕ.

* * *

Фронтăн Орел участокĕнче нимĕçсен 262-мĕш пехотнăй дивизийĕн 7 салтакĕ Хĕрлĕ Çар енне каçнă. Вĕсем тыткăна парăнма боеприпассем тиенĕ 5 автомашина çине ларса килнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи пĕр районра кĕрешекен партизансен отрядне хирĕç нимĕçсем пысăк карательнăй экспедици янă. Тăшманăн 1000 салтакĕпе офицерĕ ытла, танксемпе тата артиллерипе пырса, партизансене хупăрласа илме хăтланнă. Йĕрп-таврах оборона организацилесе, совет патриочĕсем пĕр кун хушши противникăн атакисене сирсе-сирсе тăнă. Çирĕппĕн хӳтĕленсе нимĕçсене хавшатса çитернĕ хыççăн, партизансем контратака тунă та тăшмана унинне татса тухнă. Нимĕçсен çак çапăçура вилсе кăна 130 салтакпа офицер пĕтнĕ. Нимĕçсен 2 танкне тата боеприпассем тиенĕ темиçе автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Орел участокĕнче тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем нимĕç çарĕ питех те пысăк çухатусем тӳсни çинчен каласа пĕлтереççĕ. Хĕрлĕ Çар енне каçнă ефрейторсем Людвиг В. тата Август К., нимĕçсен 56-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 192-мĕш полкра пулнăскерсем, çапла каласа панă: «Вырăс артиллерийĕпе авиацийĕ пирĕн полкăн речĕсене пушатса хăварчĕç. Хăшпĕр подразделенисем малтанхи кунах хăйсен салтакĕсен 60 процентне çити çухатрĕç. Вырăссем наступлени тума тытăнса пирĕн оборонăна татса тухсан, пирĕн командовани çавăрса илесрен хăраса каялла чакма приказ пачĕ. Пĕр йĕркесĕр тарма тытăнчĕç. Салтаксем нумайĕшĕ хĕçпăшала, шинельсене, одеялăсене тата харпăрхăйĕн ытти япалисене те пăраха-пăраха хăварчĕç. Пăтрашса кайнипе уçă курса, эпир вăрттăн хамăр взводран уйăрăлтăмăр та вырăссем патнелле тыткăна парăнма кайрăмăр».

Нимĕçсен 482-мĕш пехотнăй полкĕнчи 6-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ унтер-офицер Иоганн Шнеберçер çапла каласа панă: «6-мĕш ротăри 80 салтакран вырăссем наступлени тума пуçласан малтанхи кунĕнчех 8 çын кăна сывă юлчĕ, вĕсем те тыткăна лекрĕç».

Нимĕçсен 208-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ фельдфебель Герберт Гендоляр çапла каласа панă: «Вырăссен наступленине чарса лартас тесе, командовани пĕтĕм вăйпа тăрăшрĕ, анчах тăрăшни ăнăççăр пулчĕ. Виçĕ кун хушшинче дивизин нумай подразделенийĕсене пĕтерсе тăкрĕç. Вырăс батарейисем çав тери вăйлăн персе тăни пире тăнран ячĕ. Эпир ниçта тытăнма та, ним тума та пĕлмерĕмĕр. Салтаксем: «Вырăссем пире валли çулталăки Сталинград хатĕрлессĕ» тесе питĕ хăраса калаçатчĕç».

Пирĕн авиаци Орел чугунçул узелне, Навля, Карачев станцийĕсене тата противникăн аэродромĕсене тапăнни

Июлĕн 18-мĕшĕ ырап тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Орел чугунçул узелне, Навля, Карачев станцийĕсене тата противникăн аэродромĕсене вĕсе пырса тапăннă.

Орел чугунçул узелĕ çине фугаснăй тата вут тивертекен бомбăсем нумай пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула [illegible] пушар тухнă, противникăн эшелонĕсене сиенленĕ. [illegible]

Навля тата Карачев чугунçул станцийĕсем çине пăрахнă бомбăсем тĕл лекнине пула противникăн темиçе çар эшелонне аркатса тăкнă.

Пирĕн самолетсем çавăн пекех тата нимĕç самолечĕсем нумайăн пухăнса тăнă аэродромсем çине те бомбăсем [illegible]. Противникăн нумай самолечĕсене пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Пирĕн 3 самолет хăйсен аэродромĕсене таврăнман.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан

СУД ПРОЦЕСĔ

Çар Трибуналĕн Приговорĕ

Июлĕн 17-мĕшĕнче [illegible] председательне пулса ертсе пыракан Çурçĕр Кавказ фронтĕн Çар Трибуналĕ председателĕ юстици полковникĕ **Н. Я. Майоров** юлташ нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе тата вĕсемпе пĕр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан суд процесĕ [illegible] приговора вуласа панă.

Айăпланакансем пурте Тăван çĕршыва сутса тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче [illegible] РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58—1 «а» тата 58—1 «б» статйисемпе кăтартнă преступленисене [illegible] тесе Çар Трибуналĕ йышăннă, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1943 çулта апрелĕн 19-мĕшĕнче Тăван çĕршыва сутакансем çинчен кăларнă Указĕ çине пăхса, Трибунал çакăн пек **приговор йышăннă:**

Айăпланакан В. П. Тищенкăна, И. А. Речкалова, В. М. Ластовинăна, И. С. Пушкарева, Г. Н. Мисана, Ю. М. Напцока, И. Ф. Котомцева тата И. П. Кладова **—çакса вĕлермелле.**

Г. И. Тучкова, В. С. Павлова тата И. И. Парамонова **—кашнине çирĕмшер çул каторгăра ĕçлеме сылсăна хумалла.**

Краснодар хулинчи нумай халăх [illegible] приговора [illegible]

КРАСНОДАР, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС).

Тăван çĕршыва сутакансем пирки йышăннă приговора ĕçе кĕртнĕ

Июлĕн 18-мĕшĕнче 13 сехетре Краснодар хулинчи площадьре Тăван çĕршыва сутакан Тищенко, Пушкарев, Речкалов, Мисан, Котомцев, Напцок, Кладов тата Ластовина пирки йышăннă приговора ĕçе кĕртнĕ. [illegible] нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Краснодар хулипе Краснодар крайĕн [illegible] Çурçĕр Кавказ фронтĕн Çар Трибуналĕ çакса вĕлермелле тунă. [illegible]

КРАСНОДАР, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС).

Тырă вырмалли машинăсене пурне те ĕçе ямалла!

ЖНЕЙКĂСЕМПЕ ВЫРАÇÇĔ

ЕЛЧĔК, июлĕн 19-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри пур колхозсем те пекех ыраш вырма тухрĕç. Тĕллĕн-тĕллĕн суйласа вырма Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз июлĕн 16-мĕшĕнче тытăнчĕ. Паян колхозăн пур бригадисем те уйра. Пĕтĕм ĕç вăйĕ тырă вырнă çĕрте. Ыраш пĕтĕм лаптăкĕшĕпех вырмалла пулса çитнĕ.

Тулли пучахлă ыраш юлашки кунсенче вăйлă çилсем пулнипе çĕр çумнерех тайăнчĕ. Çакă вăл жнейкăсен ĕçне кансĕрлет. Анчах Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ĕçе лайăх туса пыраççĕ. 6 жнейка кулленех ыраш выраççĕ. Кашни жнейкăпа талăкра виççшер гектар выраççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пырать. 98 гектар вырнă та ĕнтĕ.

Бригадăсем ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тăратнă. Машинăсемпе ĕçлемен колхозницăсем, колхозниксем звеносене уйăрăлса çурлапа ĕçлеççĕ. Кашни звенон уйрăм участок. Кашни çын ăмăртса ĕçлет, унăн ĕçне уйрăммăн шута илеççĕ. Звеносем мĕнле ĕçленине кулленех кăтарту хăми çине çырса пыраççĕ. Хисеп хăми çинче—лайăх ĕçлекен колхозниксен ячĕсем.

5-мĕш бригадăра М. Леонтьева юлташ ертсе пыракан звено халь чи малта пырать. Звенора 12 колхозница. Пурте талăкри ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ. Норма тăрăх талăкра кашнин çурлапа 0,10 гектар тырă вырмалла. Ку звенори колхозниксем кулленех 0,15 гектар выраççĕ.

4-мĕш бригадăри пĕр звенора Васса Иванова кунне 0,17 гектар ыраш вырать, 2-мĕш бригадăри К. Викторов 0,16 гектар вырать. Звеносем пĕрпĕрипе ăмăртаççĕ. Хĕрачасем тырра уйра выртсах вырма кăмăл тăваççĕ. Шуçăм çутти килсен тытăнаççĕ те сĕм тĕттĕм пуличченех выраççĕ.

Колхозăн столовăйĕ паянчен пĕр хут çеç апатлантарнă. Ырантан пуçласа столовăй уйри халăха икĕ хут вĕри апат парать. Ялта площадка организациленĕ. Унта 142 ача пурăнать. Амăшĕсем пурте тырă выраççĕ.

А. ЧЕРНОВ.

Хастар комбайнер

ШĂХАСАН. **(Хамăр корр.).** «Коммунар» комбайнпа, ăна ăста ĕçлеттерсен, мĕн тери тухăçлăн тырă вырма май пуррине Тимофеев комбайнер пĕр хут çеç мар кăтартса панă. 1940 çулта вăл хăйĕн комбайнĕпе 525 гектар çинчи тырра вырса пухнă. 1942 çулта Тимофеев «Коммунар» комбайнпах 338 гектар çинчи тырра вырса пухса, 233 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Кунне 8-шар гектар вырас вырăнне вăл тăтăшах 15—18-шар гектар вырса пынă. Уйрăм кунсенче 20—21-шер гектар вырни те пулнă.

Çакăн пек тухăçлăн ĕçлесси, чи малтанах, ĕçе хатĕрленсе тухнинчен килет. Тимофеев юлташăн комбайнĕ сехет пек тĕрĕс ĕçлет. Ăна вăл тĕплĕн юсанă, тасатнă.

Çавăн пекех, комбайнпа вырмалли участока суйласа илме пĕлни, унăн анлăшĕ тата ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пыма пысăк вырăн йышăнса тăрать. Тимофеев хăйĕн комбайнĕ хăш колхозра мĕнле участок çинче ĕçлессипе малтанах пĕлсе тăрать. Çав участоксемпе вырăна тухса паллашать, хăш енчен, мĕнле майпа ĕçе пуçăнма кирлине виçсе илет. Комбайн ĕçпе лайăх йĕркелеме ялрĕ хатĕрсене колхоз правленийĕсенчен вăхăтра туса пама ыйтать.

Комбайн тухăçлă ĕçлесси, юлашкинчен, Тимофеевран хăйĕнчен килет. Юратать вăл хăйĕн ĕçне, пĕтĕм пултарулăхĕпе тимлĕхне хурса ĕçлет. Хăйĕн хастарлăхĕпе вăл юлташĕсене хавхалантарать. Ахальтен чарăнса тăни, вăхăта сая яни унăн пачах та çук. Ĕçе тухсан, вăл хăйĕн комбайнĕ патĕнчи кашни çын дисциплинăллă пулса, хăй пек тимлĕн ĕçленине юратать. Çаксем пулăшаççĕ те ĕнтĕ Тимофеев юлташа ăнăçлăн ĕçлеме. «Коммунар» комбайнпа тырă вырмалли норма—110 гектар, çакă вăл—унăн сахал. Вăл 300—400 гектар вырассишĕн кĕрешет.

Нумаях пулмасть МТС тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленнине тĕрĕслесе тухнă хыççăн трактористсемпе комбайнерсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Тимофеев юлташ сăмах каларĕ.

— Эпĕ,—терĕ вăл,—вăрçă вăхăтĕнче пĕччен ик-виçĕ çыншăн ĕçлеме кирлине лайăх ăнланатăп. Халь кашни пĕрчĕ тырă, кашни пучах хаклă. Вăл Хĕрлĕ Çара, тăван çĕршыва кирлĕ. Манра чарăну пулмĕ. Комбайнпа тырă вырмалли хамăн заданине эпĕ виçĕ хут ытларах тултарма сăмах паратăп, 110 гектар вырас вырăнне 400 гектар çинчи тырра пĕр тăккаламасăр пухса пама обязательство илетĕп.

Тимофеев юлташăн комбайнĕ халĕ ĕçе пуçăнма хатĕр.

В. ВЕСЕЛОВ.

ИРТНĔ ÇУЛХИ ЙĂНĂШСЕНЕХ ТĂВАÇÇĔ

КАЛИНИНО, июлĕн 19-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Районри 23 колхозра хĕрсех тырă вырма тытăннă. Малтанах тухнă колхозсем çак ик-виçĕ талăк хушшинче пурĕ 70—80 гектар ыраш вырнă. Анчах кĕрепленеллĕ çавасемпе жнейкăсем халĕ те ĕçре мар. Ытларах çурласемпе вырас шухăшпа районри руководительсем те килĕшсе лараççĕ.

Чалăм Кăкшăмри Сталин ячĕпе тăракан колхоз паянхи кун тĕлне 30 гектар ытла ыраш вырнă. Пурне те çурласемпе çеç. Жнейкăсемпе вырма тытăнман. Элменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозăн икĕ жнейка, анчах вĕсене юсаман, ĕçе кăларма шутламаççĕ те. Колхозниксемпе колхозницăсем лайăхрах та хăвăртрах ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Нумайĕшĕ талăкри нормăна ирттерсе тултараççĕ. Анчах машинăсемпе кĕрепленеллĕ çавасене вăхăтра ĕçе кăларманни уборкăна вăраха яма пултарать. Вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлес пулсан тырра машинăсемпе ытларах вырмалла, ĕçĕн тухăçлăхне ӳстермелле.

Тепĕр ик-виçĕ кун иртсен колхозсен авăн çапма тытăнмалла. Анчах хăшпĕр колхозсем çав ĕçе йĕркеллĕ тытăнма хатĕр мар. Ассакассинчи «КИМ» колхоз итемĕсене тасатман. Витнĕ итемĕн тăрринне çил вистесе кайнă, вăл халĕ те çаплипех ларать.

Ĕнер районра колхоз активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура çак çитменлĕхсем пирки калаçу нумай пулчĕ. Ĕçе сăмах вĕççĕн хăвармалла мар, тырă вырса пухас ĕçĕн тухăçлăхне кунран кун вăйлатса пырас пулать. Кашни жнейка, лобогрейка халех ĕçре пултăр, çавăн пекех тырра кĕрепленеллĕ çавасемпе те çулмалла.

С. ШАДИН.

Жнейкăсем ĕçлемеççĕ

ШĂХАСАН. Чăрăшкассинчи «Соревнование» колхоз членĕсем хĕрсех ыраш выраççĕ. Звеносене уйăрăлса, пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Таисия Васильева, Анна Македонова, Дарья Панфилова юлташсем кунне 0,12—0, 13-шер гектар тырă выраççĕ. 60 çултан иртнĕ Татьяна Павлова та вĕсенчен юлмасть. Ĕç нормине ĕнер вăл 140 процент тултарнă, паян та çамрăксенчен ирттерет.

Уйра кулленех 94 колхозник çурлапа тырă вырать. Тухăçлăн ĕçлеççĕ вĕсем, анчах татах та тухăçлăрах ĕçлес пулсан, жнейкăсемпе усă курмалла. Колхозниксен ĕçне çăмăллатмалла. Тырра вăраха ямасăр, тăккаламасăр хăвăрт пухса кĕртмелле. Анчах çакна ăнланман-ха кунта. Жнейкăсем ĕçре мар, вĕсемпе халь пачах усă курман.

В ВЕСЕЛОВ.

Ыраш вырма тухнă

ВĂРНАР, июлĕн 19-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри уйрăм колхозсем тырă вырма тухрĕç. Ыран-паянах Вăрманкассинчи, Уравăшри, Рунгăри, Кăташри, Мачамăшри колхозсем тырра массăллăн вырма тухаççĕ.

* * *

ÇĔРПУ, июлĕн 19-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Уйхирте ыраш пулса çитсе пырать. Пĕтĕм лаптăкĕшпе пулса çитессе кĕтсе тăмасăр, уйрăм участоксенче тырра суйласа вырма вăхăт. «Красный флот», «Молодая сила», «Красный герой» тата «Ĕмĕт» колхозсем паян ирех суйласа ыраш вырма пуçларĕç.

Районри ытти колхозсен те ырантан пуçласа пиçнĕ ыраша суйласа вырма тухмалла пулать.

И. МАЛГАЙ.

Хатĕрленӳ ĕçне хăвăртрах вĕçлемелле

ИШЛЕЙ. Районри колхозсенче тĕрĕслӳ организованно иртрĕ. Чылай колхозсем тырă вырма тухма хатĕрленсе çитнĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозăн 2 жнейка, 2 молотилка ĕçе кайма паянах хатĕр. Итемсене, тырă хумалли складсене тасатнă, дезинфекциленĕ. Урапасемпе лаша таврашĕсене кашни кӳлмелли лаша валли çителĕклĕ хатĕрленĕ. Кашни бригадăрах 10—12-шер кĕрепленеллĕ çава хатĕрленĕ. Тырă вырма тухсан 5-мĕш кунне государствăна тырă леçме кайма тытăнмалла. Ку ĕçпе ĕçлеме 6 лаша уйăрнă, бригада организациленĕ. Ĕç планĕ тунă. Колхозра ача яслийĕ йĕркеллĕ ĕçлет. Тырă вырма тухсан столовăй пулать, çимĕçсем хатĕрлесе хунă. Агитаци ĕçне туса пыма бригадăсенче агитаторсем, хаçат вулакансем, боевой листок кăларакансем уйăрса лартнă. Кашни бригадăрах хаçат витринисем организациленĕ.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсенче çитменлĕхсем чылай-ха. Ямайкасси ялсоветне кĕрекен 6 колхозран тăваттăшĕ уборкăна тухма хатĕр мар. Кунта машинăсене юсаса çитермен, итемсене, складсене тасатман. Кăçт тăхтасанах тырă вырма тухмалла пулать. Хăвăртрах хатĕрленсе çитмелле. Пур колхозсенче те уборкăна вăхăтра, организованно тухмалла.

В. ГУСЬКОВ.

Тырра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме хатĕр

СОВЕТСКОЕ. Тури Ачакри «Крестьянская газета» колхоз (председателĕ коммунист Р. Цветков) çулсеренех вăйлă тырпул туса илет. Колхоз çураки ĕçĕсене аван ирттернĕ. Халĕ хăмăш пек кашласа ӳсекен тырпула пухса кĕртме хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать. Колхозра уборка умĕнхи ĕçсене чылай тунă.

Ялхуçалăх инвентарĕсене юсама çуракине вĕçленĕ хыççăнах тытăннă. Халĕ юсаса çитернĕ 3 жнейка тырă вырма тухмашкăн хатĕр. Молотилкăсене те юсанă. Виçĕ сортировка тата тепĕр веялка пур. 40 урапа тата лаша таврашĕсене 48 комплект юсанă. Тырă типĕтмеллисем, виçе-тарасасем çителĕклĕ.

Колхозниксем тырпула пухса кĕртес ĕçре пур тĕрлĕ инвентарьпе те анлăн усă курма ĕмĕтленеççĕ. Çавăнпа та вĕсем 20 кĕрепленеллĕ çава хатĕрлесе хунă тата 250 çава, 280 кĕрепле, 305 тăпачă пур. 300 лапатка илнĕ, 281 çурла шăллаттарнă.

Колхозра пĕтĕмпе 4 бригада. Вĕсен кашниннех витнĕ итемсем пур. Итемсене çӳп-çапсемпе уламсенчен тасатса тухнă, витнĕ итемсен тăррисем юсавлă, вĕсем тавра картасем тытса тухнă.

Кунта тырпула пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлеме кадрсем хатĕрлессине те пысăк вырăна хунă. Курс витĕр жнейкăпа тырă вырма 4 çын, молотилка çинче ĕçлеме 2 çын вĕрентсе кăларнă, шапчăклă çынсенчен кашни бригада валли пĕрер весовщик çирĕплетсе хунă. Пĕр сăмахпа каласан, кашни колхозник уборка вăхăтĕнчи хăйĕн ĕç вырăнне тĕплĕн пĕлсе тăрать.

Ĕç тухăçлăхĕ ӳстĕр тесе, колхоз уборка вăхăтĕнче 250 çын валли пĕрлешӳллĕ столовăй организацилет, ăна валли продуктсем кирлĕ чухлех хатĕрлесе хунă. Ачасен ясли утă çулма тытăнсанах ĕçлеме пуçларĕ, унта 50 ача çӳрет. Яслине икĕ вырăнта уçнăшăн колхозниксем питĕ кăмăллă пулчĕç. Уборкăра 86 ача валли площадка пулать.

Пур кирлĕ условисене те çителĕклĕ туса колхозниксем тухăçлă тырпула пĕр тăкаксăр, кĕске срокра пухса кĕртме ĕмĕтленеççĕ. Çавна тума вĕсен пур шанчăксем те пур тата икĕ-виçĕ çыншăн ĕçлеме фронтри земляксен паттăр ĕçĕ хавхалантарать.

Я. СИГАЕВ.

Осоавиахим организацийĕсен ĕçне вăйлататпăр

Осоавиахимăн Йĕпреç райсовечĕн председателĕсем час-часах улшăнса тăнă пирки вăл çителĕклĕ таран ĕçлесе пырайман. Юлашки вăхăтра Осоавиахимăн предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсене вăйлатса ярас тĕлĕшпе Осоавиахим райсовечĕ çине тăрсах ĕçлеме пуçларĕ. Кăçалхи апрель уйăхĕ тĕлне Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсем районра икĕ-виççĕ çеç пулнă пулсан, юлашки вăхăтра 19 организаци çитрĕ. Вĕсем 700 çынна пĕрлештерсе тăраççĕ. Уйрăмăнах вăрманпромхоз çумĕнчи организаци малта пырать. Кунта Осоавиахим членне 106 çынна явăçтарнă. Халь вĕсем пурте вăрçă ĕçне вĕренеççĕ. Çавăн пекех Эпесри туллимар вăтам шкул çумĕнчи Осоавиахим организацийĕ те лайăх ĕçлет. Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕ тăрăшнипе 95 çынна çар ĕçне вĕрентнĕ, вĕсенчен çурри ытла оборона значокĕн нормисене панă. Çитес кунсенче татах 20 çын нормăсем параççĕ.

«Эконом» колхозра иртнĕ çулсенче Осоавиахим организацийĕ пулман. Халĕ унта В. Будков юлташ тăрăшнипе Осоавиахим организацийĕ ĕçе тытăнчĕ. Будков юлташ тăрăшнипе тепĕр икĕ колхозра 107 çын ПВХО нормине панă.

Осоавиахим организацийĕсене пур колхозсенче те организацилемен-ха. Осоавиахимăн республикăри Центральный Совечĕ пире çителĕксĕр пулăшать. Пулăшма тесе пыракан çынсем 3—4 кун пурăнаççĕ те пулăшу памасăрах тухса каяççĕ.

П. КУРАКОВ.

Осоавиахим Йĕпреç райсовечĕн председателĕ.

Вулав çурчĕн ĕçне вăйлатмалла

КАЛИНИНО. Тури Карачура ялсоветĕ çумĕнчи вулав çурчĕ хăйĕн ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пымасть. Вулав çуртĕнче юлашки вăхăтра тухнă кĕнекесем питех те сахал. Унта кивĕ, çĕтĕлсе пĕтнĕ кĕнекесем кăна купаланса тăраççĕ. Вулав çурчĕ пĕр экземпляр хаçат-журнал та çырăнса илмест. Вулав çурчĕн заведующийĕ А. Егорова вулав çуртне йĕркелесе ярассишĕн тăрăшмасть. Ăна вулав çуртĕнче те курма май çук. А. Егорова ялсоветне кĕрекен колхозсенче нимĕнле темăпа та пĕр калаçу та ирттермен. Ку ĕçе организацилме те тăрăшмарĕ.

Кун çинчен райсутĕç пайĕ пĕлет, анчах нимĕн те шарламасть-ха.

Б. Шорников.

Владимир Маяковский çуралнăранпа 50 çул тултарнă ятпа литературăпа музыка вечерĕ пулать

Июлĕн 19-мĕшĕнче совет самананчи чи талантлă поэт Владимир Маяковский çуралнăранпа 50 çул тултарчĕ.

Поэта чысласа, чăваш совет писателĕсен Союзĕпе республикăри Максим Горький ячĕпе тăракан библиотека июлĕн 21-мĕшĕнче Чăвашсен Государство Академи Театрĕнче пысăк вечер ирттереççĕ.

«Маяковский пирĕнпе» ятлă темăпа Сергей Иванов писатель доклад туса парать.

Чăваш поэчĕ Ст. Шавлы Владимир Маяковскин чăвашла куçарнă произведенийĕсене вуласа парать. Чăваш поэчĕсем—орденоносец Н. Шелеби тата С. Эльгер, вырăс поэчĕсем А. Поморский тата Е. Белякова отечественнăй вăрçă çинчен çырнă хăйсен произведенийĕсене вуласа параççĕ.

Концерта ЧГАТ артистки Е. В. Крылова, Мускав композиторĕ Елизавета Купшер, виолончелист Островский, солисткăсем А. А. Некрасова, В. Х. Воронова юлташсем тата ыттисем те хутшăнаççĕ.

Вечерта тухнă укçа-тенкĕ ирĕке кăларнă районсенчи библиотекăсене юсама пулăшма çĕре каять.

СТАДИОНРА

Шупашкарти стадионра виçĕмкун халăх тулли́ех. Кунта вĕсем физкультурниксен кунĕ ячĕпе пулакан вăйăсене курма пухăннă. Чи малтан Шупашкарти арçынсен сборнăй командипе Хусанти авиаци институтĕнчен килнĕ команда волейболла вылярĕç. 2:1 шутпа Хусанти авиаци институчĕн команди çĕнтерет. Ун хыççăн Шупашкарти хĕрачасен сборнăй командипе Хусантан килнĕ команда баскетболла выляççĕ. Ку вăйăра та Хусантан килнĕ физкультурниксен команди лайăхрах хатĕрленни курăнать, вĕсем 23:20 шутпа çĕнтереççĕ.

Юлашкинчен Шупашкарти «Сталинец» командăпа Хусантан килнĕ команда футболла выляççĕ. «Сталинец» хăйĕн мастерлăхне лайăх кăтартрĕ. Вăл команда 2:1 шутпа Хусан командине çĕнтерет.

Июлĕн 18-мĕшĕнче пулса иртнĕ ăмăрту пирĕн физкультура ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пуррине кăтартрĕ. Физкультура обществисен тренировкăллă занятийĕсем тăтăшах пулса иртмеççĕ. Ăмăртăва хутшăнас умĕн кăна васкаса тренировкăсем ирттереççĕ.

Çакăн хыççăн физкультурăпа спорт Комитечĕн тивĕçлĕ вывод тумалла. Физкультура ĕçне кулленех вăйлатса пымалла.

Ф. М-н.

Тĕрĕсленсе килнĕ материалсем

Нумай пулмасть «Чăваш Коммуни» редакцине Калинин районĕнчи «Красный кавалерист» колхоз председателĕ А. Денисов колхоз пурлăхне 20 пин тенкĕлĕх ĕçсе яни çинчен, колхоза тивĕçлипе ертсе пыманни тата унта пысăк çитменлĕхсем пурри çинчен çырса пĕлтернĕччĕ.

Редакци çав çырăва тĕрĕслеме ячĕ. Калинино районĕн прокурорĕ çапла пĕлтерчĕ: А. Денисов колхозăн пурлăхне 20 пин тенкĕлĕх çаратнă çеç мар, кунсăр пуçне Денисов ытти юрăхсăр ĕçсем те тунă. Çак ĕçсемпĕн ăна халĕхи вăхăтра ответ тыттарнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Мускав облаçĕнчи Педагогика Институчĕ 1943—44 çул валли 1-мĕш курса тата аслă курссене те вĕренме студентсем илесси çинчен пĕлтерет. Çак факультетсене илеççĕ: естествоведение, географи, физикăпа математика, истори, чĕлхепе литература.

Студентсене общежитие вырнаçтараççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене памалла: 1) автобиографи, 2) вăтам шкул пĕтерни çинчен калакан аттестат, 3) сывлăх мĕнлине кăтартакан справка, 4) виçĕ фотокарточка.

Адрес çапла: Киров облаçĕ, Мамлык хули, Комсомольски урам, 4-мĕш номерлĕ çурт. Мускав облаçĕнчи Педагогика Институчĕ. 3—3

Шупашкарти Энергетика Техникумĕ

1-мĕш курса вĕренме илет.

Техникум çакăн пек специалистсене хатĕрлет: дизелист, электрик тата строитель-техник. Техникума туллимар вăтам шкулсене „отлично" е „хорошо" паллăсемпе вĕренсе пĕтернĕ çамрăксене—экзаменсăрах, ыттисене испытанипе илеççĕ.

Ку техникума кĕмелли условисем çинчен тĕплĕнрех „Красная Чувашия" хаçатра июнĕн 25-мĕшĕнчи 130-мĕш №-те пĕлтернĕ.

Справкăсем ыйтса пĕлмелли тата заявленисемпе документсем ямалли адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 23.

Кĕсре çухалнă. Паллисем çакăн пек: тĕсĕ—хăла, çуллĕшĕ 142 см., уннăра „69" тесе çапса кăларнă цифра пур, 7 çулта.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр, гор. Канаш. Чувашской АССР, ул. Калинина, 23. пункту Растяучук.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 199 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.